● *Ăслăлăх*

# “Пĕр тĕвĕре ĕçлесчĕ”

**Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕ 2009 çулхи ăслăлăх ĕçĕсен пĕтĕмлетӳ сессине нарăсăн 11-мĕшĕнче вĕçлерĕ. Секцисенче виçĕ кун тăсăлнă ĕç-хĕле, палăртнă сĕнӳсемпе ыйтусене сӳтсе явма наука çыннисем пленарлă ларăва пухăнчĕç.**

Институтăн кирек хăш пайĕ çинчен сăмах пуçарсан та çакă палăрчĕ: ăсчахсем хăйсем суйласа илнĕ темăсене анлă тишкернĕ, наукăшăн çĕнĕ меслетсем тупса çирĕплетнĕ е хальччен каламан шухăш патне килсе тухнă. Тĕслĕхрен, археологи пайĕ юлашки çулсенче самай хăюллă та кирлĕ пуçарусем тунă. Шупашкар историне çĕр чавса тупнă хăш-пĕр япала урлă тата тĕплĕнрех тишкерме пуçланă. 2009 çулта археологи ĕçĕсем республикăн тĕп хулинче çеç мар, авалхи Çĕрпӳ çĕрĕ çинче те ăнăçлă иртнĕ. Çĕр айĕнчи вăрттăнлăхсен тупсăмне шыраса тунă хăш-пĕр пĕтĕмлетӳпе ăслăлăх сессийĕнче Е.П.Михайлов тата А.Ю.Березин паллаштарнă.

Историе тĕпчени – паллă, анчах Чăваш Енре паянхи кун мĕн пулса иртнине, унăн халькхи сăн-сăпатне ăсчахсем йĕрлеççĕ-и? “Çапла” тесе иккĕленмесĕрех хуравлама социологи пайĕнче тăрăшакансен доклачĕсене итленĕ тĕк май килетчĕ. Çак секцие хутшăнакансем кăсăклă ыйтусем хускатнă. Философи ăслăлăхĕсен кандидачĕ М.Н.Краснова – Чăваш Республикинчи демографи лару-тăрăвне, социологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Н.Г.Семедова-Полупан вĕрентӳ политикине тишкерсе хак панă. Пай ертӳçи И.Е.Ильин ăслăлăхпа студентсем те чылайăн интересленнине темиçе тĕслĕхпе çирĕплетрĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн истори-географи факультетĕнче ăс пухакан Е.Кондратьева тата Е.Романова Атăлçи регионĕнчи çамрăксен ипотека программисене танлаштарса тĕпченĕ ĕçĕпе паллаштарни асăннă шухăшах палăртать. Ларура хăш-пĕр ăсчахăн иккĕленӳ çуралчĕ: алла диплом илме хатĕрленекенсене академик шайĕнчи тепчевçĕсен ĕç-хĕлне явăçтармалла-ши? Çийĕнчех уçăмлă хурав тупăнчĕ: наукăра çамрăк кадрсем çав тери сахал чухне çапла пулмалла та, студент çулĕсенчех ăслăлăха туртăннин паха енĕсене çеç курмалла.

Тин çеç иртнĕ пĕтĕмлетӳ сессийĕн ырă уйрăмлăхĕсене асăннă май çакна та палăртам: ăслăлăх институчĕн ĕçченĕсем музей сотрудникĕсемпе, тавра пĕлӳçĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ, кăткăс ыйтусене пĕрле сӳтсе яваççĕ. Литература пĕлĕвĕпе фольклористика пайĕн ĕçне ку хутĕнче Н.П.Пантелеймонов /Н.Никольский, Т.Кириллов тăванĕ/ тавра пĕлӳçĕ хутшăнчĕ: Тарас Кириллов сăвăçăн йăх-несĕлĕ çинчен каласа пачĕ.

Ăслăлăх мероприятийĕн картинче Берец Андраш чăваш юррисене тĕпчесе венгрла юрлаттарнине хакларĕç. Хăйне евĕр ку презентацие искусство пĕлĕвĕсен докторĕ М.Г.Кондратьев, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Н.И.Егоров, истори наукисен кандидачĕ Г.Б.Матвеев, Республикăри халăх пултарулăх çурчĕн ĕçченĕ С.Г.Лаврентьева, “Уяв” ансамбль ертӳçи З.Н.Козлова хутшăнчĕç.

...Наука уйрăм çыннăн ĕçĕ те, бизнес та мар – чылай çӳллĕрех шайра тăракан тытăм. Унта кашни çыннăн “каçалăкне” йышпа тĕплĕн тишкерни, хаклани, васкавлă пĕтĕмлетӳ тăвиччен çиччĕ виçни кирлех. Ахальтен мар ЧПГĂИ ĕçченĕсем пĕр чăнлăха çиеле кăларчĕç: “Пĕр тĕвĕре ĕçлесчĕ...”

■ **Ирина ПУШКИНА**

## Вунă çуллăха пĕтĕмлетсе

**Иртнĕ эрне кун Чăваш патшалăх филармонийĕнче Чăваш патшалăх академи капеллин симфони оркестрне йĕркеленĕренпе 10 çул çитнине халалласа концерт иртрĕ.**

**Кунашкал коллектив пирĕн маларах та, 1932-1959 çулсенче, пулнă-ха. Ун чухне вăл Атăлçи тăрăхĕнче пĕртен-пĕрре шутланнă.**

**Раççей халăх артисчĕ Морис Яклашкин ертсе пыракан оркестр кĕске вăхăтрах репертуара пуянлатма пултарчĕ. Чăваш композиторĕсен кĕвĕ-çеммисемсĕр пуçне тĕнче музыка классикин произведенийĕсем те пур унта.**

**Юбилей каçне А.Дворжакăн 9-мĕш симфонийĕ уçрĕ. Унтан П.Чайковскин “Лебединое озеро” балетĕнчи “Испан ташши”, Е.Доган “Вальсĕ”, М.Мусоргскин “Борис Годуновĕ”, Г.Хирбюн “Нарспи” оперинчи вăйă юррисем, К.Орфăн “Кармина Бурана” кантатин пĕрремĕш пайĕ, ыттисем янăрарĕç.**

**Симфони оркестрне саламлама ЧР культура министрĕ Роза Лизакова, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ, культура енĕпе ĕçлекен комитет председателĕ Владимир Мидуков пынă. Роза Михайловна оркестр ĕçченĕсенчен чи хастаррисене министерствăн Хисеп грамотипе наградăларĕ, Владимир Петрович вара – ЧР Патшалăх Канашĕннипе.**

■ **Н.СМИРНОВА**

● *Юбилей*

# Ял шăпи – унăн чун ыратăвĕ

**Çак кунсенче Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх художникĕ, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ Николай Карачарсков 75 çул тултарчĕ. Яллă вырăнта пурăнакансемшĕн унăн ячĕ уйрăмах çывăх. Вăл хăйĕн картинисенче республикăри хресчен пурнăçне çур ĕмĕре яхăн ӳкерсе кăтартать.**



Тырă çитĕнтерекенсене, механизаторсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене юратса тата чунчĕререн хисеплесе сăнарлать художник. Вĕсем çеç-и? Ăсчахсем те, литературăпа искусство ĕçченĕсем те, ĕçпе вăрçă ветеранĕсем те ун “алли” витĕр” тухнă. Николай Прокофьевичшăн пейзаж жанрĕ те ют мар. Çапла майпа вăл çĕр-çĕр ӳкерчĕк, эскиз, этюд, живопиç картини ӳкернĕ. Çав произведенисемпе Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчи, çавăн пекех Германи, Норвеги, АПШ, Монголи, Япони, Афганистан çĕршывĕсенчи, ытти çĕрти ӳнер тусĕсем те паллашнă.

Ӳнерçĕн юратнă теми – ял, унăн пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ тата уявĕсем. Çак пулăмсене вăл реализм меслечĕпе “вилĕмсĕрлетет”. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче “Ял шурăм пуçĕ” пултарулăх ушкăнĕ йĕркелесе Чăваш Енри пур района та çитсе курнă. Курнă çеç мар, ĕç паттăрĕсемпе паллашнă, вĕсене ӳкернĕ. 1971 çулта “Ял шурăм пуçĕ” Патăрьел районĕнчи “Гвардеец” колхозра, 1975 çулта “Янгорчино” /Вăрнар районĕ/ хуçалăхра картинăсен ярăмне ӳкернĕ. Çак ĕçсене пурнăçласа Николай Карачарсков сумлă ятсемпе пĕрлех СССР Ӳнер академийĕн кĕмĕл медальне тивĕçнĕ.

Çĕрпелсемшĕн “Ял шурăм пуçĕ” тепĕр самантпа та пĕлтерĕшлĕ. Кунта тĕлĕнмелле картина галерейи йĕркеленнĕ. Хальхи вăхăтра унта живопиçпе графикăн 300 ытла ĕçĕ упранать. Галерейăн пĕр стени çинче – Çĕрпел фронтовикĕсен 92 портречĕ. Çаксенчен çуррине Николай Карачарсков ӳкернĕ.

Хăйĕн пултарулăхĕнче художник тĕнче, Тăван çĕршыв классика искусствине тытса пырать, çавăнпа пĕрлех чăваш ӳнер искусствин никĕслевçисен йăли-йĕркине çирĕп пăхăнать. Çакна эпир, куракансем, унăн чылай ĕçĕнче асăрхатпăр.

Николай Прокофьевич тăван кĕтесĕпе – Пăрачкав районĕнчи Шадриха ялĕпе – çыхăнăва татман. 1995 çулта унта Карачарсковсен пултарулăх çуртне уçнăччĕ. 2005 çулта, шел те, çурт та, унти картина галерейи те пушарта çунса кĕлленнĕ. Çапах та пысăк инкек ӳнерçĕн чунне “шăнтса” лартайман. Халĕ Николай Прокофьевич ăна çĕнĕрен тума пуçланă. Кăçалхи çу уйăхĕнче Шадрихăра часавай уçăлĕ. Ӳнерçĕ ăна хăйсен ентешĕсене, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене, халалланă.

Н.Карачарсков хăйĕн ĕç-хĕлне Чăваш Ен Художниксен союзĕн Ӳнер фонĕчĕпе çыхăнтарнă. Унта вăл 41 çул ĕçленĕ.

Çывăх кунсенчех Николай Прокофьевичăн юбилей куравĕпе паллашăпăр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

# Верди кĕввисен уявĕ вĕçленчĕ

**Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Дж. Верди Музыкин кунĕсем пыни пирки “Хыпарта” пĕлтернĕччĕ. Иртнĕ шăмат кун кĕвĕ-çемĕ уявĕ “Viva Verdi” гала-концертпа хупăнчĕ.**



● *Мария Еланова.*

Концерт программине Джузеппе Вердин паллă оперисенчи арисене, сценăсемпе ансамбльсене кĕртнĕ. Вĕсене Чăваш Ен опера сценин ертсе пыракан тата çамрăк солисчĕсем юрларĕç. Куракансемпе итлекенсем Ольга Вильдяевăн Аидине, Лариса Васюхинăн Виолеттине, Людмила Яковлевăн Эльвирине /“Эрнани”/, Татьяна Тойбахтинăн Еленине /“Сицилийская вечерня”/ ăшшăн йышăнчĕç.

Çав каç сцена çине композиторăн “Макбет” оперинчи партисемпе Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артистки Мария Еланова, Чăваш халăх артистки Елена Галкина, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Дмитрий Семкин, Пĕтĕм тĕнчери конкурссен лауреачĕ Константин Москалев тата ыттисем тухрĕç.

Дж.Верди Музыкин кунĕсенче паллă композиторăн “Бал-маскард”, “Риголетто”, “Трубадур”, “Травиата” оперисемпе тата “Реквием” хайлавĕпе, СССР халăх артисткине Ирина Архиповăна халалланăскерпе, – паллашма май пулчĕ.

■ **Н.ГЕОРГИЕВА**

## Пĕлме интереслĕ

**Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх, Раççей çыннисен пĕвĕ çулсеренех чакса пырать, эпир чи лутра пӳллĕ нацисен йышне кĕретпĕр. Пирĕн çĕршывра пурăнакансем юлашки 10 çулта кăна 1,5 сантиметр пĕчĕкленнĕ, иртнĕ 200 çул хушшинче – 10 сантиметр. Мĕншĕн çапла пулса тухать-ха?**

**Ăсчахсем палăртнă тăрăх, арçыннăн 165-185 сантиметр çӳллĕш пулмалла. Пысăк пӳллĕ çынсем час-часах чирлеççĕ. Вĕсен пуçĕ çӳлерех, çавăнпа юна пуç мимине илсе çитерме вăй ытларах кирлĕ, чĕри ытларах ĕçлет, çавна пула чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем те нумайрах канăççăрлантараççĕ. Аса илтеретпĕр: Борис Ельцин 188 сантиметр çӳллĕш пулнă, Владимир Путин – 170, Дмитрий Медведев – 162 сантиметр.**

● *Çĕнĕ сăвăсем*

***Александр САВЕЛЬЕВ-САС***

### Пурнăç урапи

Савнине кĕтеççĕ савнисем.
Ĕç патне васкаççĕ
сыввисем.
Чирлисем кĕтеççĕ тухтăра,
Пулăшу ыйтаççĕ Турăран...
Çук кунта нимех те усалли,
Çавăн пек вăл пурнăç
урапи.

Выляса-чупса çӳрет ача,
Ача пекех çитĕнет калча.
Вăрманта вĕлле ватас
шутпа
Шыранса çӳрет мăран упа..
Çук кунта нимех те усалли,
Çавăн пек вăл пурнăç
урапи.

Ак çăва. Çĕн шăтăк, çĕн
тăпра.
Тепĕри ăсаннă тĕнчерен.
Мантарса нуша та терт
çинчен
Туй сасси килет Тукас
енчен...
Çурхи кун, тăман-и куç
курми –
Малаллах çав пурнăç
кустăрми.

### Истори кĕнекине тытсан

Истори кĕнеки пит хулăн.
Вула, тĕпче те хыв ăша.
Ăна алла илсен пĕр хушă
Каллех путатăп шухăша.

Эпир çынран час тунă Турă
Мансах тăвас-килес куна.
Вара хури те пулнă шурă –
Тек суйнă хамăрăн чуна.

Çынран хĕвел те тунă эпĕр –
Пуça ватса-туса тăман.
Анчах “хĕвелĕ” шăн пăр
евĕр
Пире шав шăнтнă,
ăшăтман.

Ăнах каланă: “Ăмăрт кайăк!
Хăлат эс! Кăйкăр ку чухне!”
Туйман ытла мухтанă
майăн:
Вăл чавнă хамăр куççенех.

“Атте” тесе янах янратнă
Пиртен кашнийĕ тăтăшах.
Анчах леш вăрттăн
тăпăлтарнă
Алри пĕртен-пĕр татăка...

Çапла, вĕренĕн те пур
вĕçĕ,
Тухать, пулать явсан-явсан.
Шалт тĕлĕнсе çапатпăр пĕçĕ
Куçа яри уçса пăхсан.

Вара калатпăр: йăнăш тунă
Хăюсăр, тимсĕр пулнăран...
Çынран тума Хĕвел те Турă
Пăртак хăрасчĕ ТУРĂРАН.

### Хĕл умĕ

Кантăкран шаккарĕ
Çулçăсăр турат:
– Юр çума пуçларĕ,
Ху тухса кур ак.

Ку вăл – хĕлĕн пуçĕ.
Сивĕтĕ часах.
Йăпăрт яла куçрĕ
Вăрмантан чакак.

Кӳл хĕрри пушаннă.
Сив тĕтре карать.
Пылчăка пытаннă –
Тĕлĕрет карас.

Кĕрĕк çĕнетмешкĕн
Ерĕçнĕ мулкач.
Уçăм чĕпĕтмешкĕн
Халь çӳрет каç-каç.

Выльăх-чĕрлĕх ӳлĕм
Анмĕ улăха.
Юрĕ, утă-улăм
Пур-ха выльăха...

Кантăкран шаккарĕ
Çулçăсăр турат:
– Юр çума пуçларĕ,
Кил, тухса курах!

# Суд ĕçченĕсем ăмăртнă

Тĕп хулари Ачасемпе çамрăксен 4-мĕш спорт шкулĕн йĕлтĕр базинче республикăри судьясемпе Аслă суд аппаратĕн, Арбитраж сучĕн, Чăваш Республикинчи Суд департаменчĕн управленийĕн ĕçченĕсем йĕлтĕрпе чупса ăмăртнă.

Йĕлтĕр йĕрĕ çине пурĕ 130 çын тухнă. Ăмăртусене 8 ушкăна пайланса ирттернĕ. Командăсен хушшинче Тăвай район сучĕ çĕнтернĕ, кубок çĕнсе илнĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Арбитраж сучĕпе Красноармейски район сучĕ пайланă.

■ **Т.МИХАЙЛОВА**

# Наркомансем валли – брошюра

Нью-Йоркри наркомансене юн тымарĕнчен укол тĕрĕс тума вĕрентеççĕ: сывлăх сыхлавĕн хулари департаменчĕ наркомансем валли тивĕçлĕ брошюра кăларнă.

16 страницăллă кĕнеке героинпа усă куракансене наркотик мĕнлерех тĕрĕс хатĕрлемелли, юн тымарĕсене епле пăхса тăмалли çинчен каласа кăтартать. Уйрăммăн илсен, унта тĕрлĕ канаш пур.

Сывлăх сыхлавĕн органĕсенче ĕçлекенсем каланă тăрăх, çак кĕнекене çынсен пурнăçне çăлас тĕллевпе кăларнă.

**Lenta.ru**

# Пирвайхи чемпионсем – пирĕннисем мар...

Канадăри Ванкувер хулинче 82 çĕршывран чи пултарулă спортсменсене пухнă XXI хĕллехи Олимпиада малалла пырать. Спортăн 15 тĕсĕпе пырĕ çивĕч кĕрешӳ. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене медальсемсĕр тата яланлăхах юлакан чыспа мухтавсăр пуçне самаях пысăк премисем те кĕтеççĕ. Раççей правительстви йышăнăвĕ тăрăх, чемпионсен кĕсйине 100 пин евро кĕрет, иккĕмĕш вырăн йышăннисем 60 пин евро илĕç, “бронза” призерсем – 40 пин евро.

Малтанхи кунсенче камсем тивĕçнĕ-ха хаклă наградăсене? Акă фристайл текен спорта, унăн “могул” ятлă пĕр ăмăртăвне илер. Кунта чи пултарулли Канада спортсменĕ Александр Билодо пулнă, иккĕмĕш вырăнта – австралиец, виççĕмĕшĕнче – американ. Раççей командинчи спортсменсем 10, 13, 25, 28-мĕш вырăнсене кăна йышăннă. Биатлон старчĕсене чи малтан хĕрарăмсем тухнă, вĕсем 7,5 километра чупса тата винтовкăран тĕл персе ăмăртнă. Эпир Раççей чысне хӳтĕлекен спортсменкăсене те хисеп пьедесталĕ çинче курма ĕмĕтленеттĕмĕрччĕ. Вĕсем тăваттăнччĕ – Анна Булыгина, Ольга Зайцева, Светлана Слепцова, Ольга Медведцева. Мĕн пулса тухрĕ-ха? Булыгина финиша ыттисенчен ăнăçлăрах çитрĕ, анчах вăл та тăваттăмĕш кăна. Олимп чемпионĕн ятне, пурне те тĕлĕнтерсе, Словаки командинчи Анастасия Кузьмина çĕнсе илчĕ. Ун пирки вара комментаторсем çапла каларĕç – “Раççей гражданки пулнăскер”. Арçын-биатлонистсен тепĕр кунхи ăмăртăвĕнче Венсан Жэй француз мала тухрĕ, Норвеги, Германи, Раççей спортсменĕсене кая хăварчĕ. Каллех сенсаци! Пирĕн Иван Черезов, шел, вуннăмĕш çеç пулчĕ, ыттисем татах та “аялта”. Хĕрарăмсен хоккей команди Финлянди командине 1:5 шутпа выляса янă...

Паллах, çĕнтерӳçĕсен кăтартăвĕсене пурне те илсе кăтартаймăпăр. Виçĕ кунри ăмăртусенче медальсен шучĕпе Франци малта /икĕ ылтăнпа пĕр бронза/, ун хыççăн – Германи, АПШ, Канада, Корея... Раççей – вун тăваттăмĕш, унăн хальлĕхе Иван Скобрев 5000 метра конькипе чупса çĕнсе илнĕ пĕртен-пĕр бронза медаль кăна. Чаплах мар. Анчах та нарăс вĕçĕччĕнех тăсăлакан Олимпиадăра лару-тăру часах урăхланĕ, Раççей спортсменĕсем те вăйлисемпе тан ăмăртма вăй-хал çитерĕç.

■ **Ю.ПЛОТНИКОВ**

● *Тискерлĕх*

# Кăмакара çунтарасшăн пулнă

Следстви комитечĕн Етĕрнери пайне çитмĕл урлă каçнă ватă пулăшу ыйтма пынă. Ывăлĕ темиçе кун килне таврăнманнине кура канăçне çухатнăскер ăна хăй тĕллĕн те шыранă-ха, анчах усси пулман. Йĕп мар-çке çын. 47-ри арçын ăс-тăнĕ арпашăннипе нихçан та аптăраман, килтен вăрахлăха тухса çӳренине те ас тумаççĕ. Ватă ашшĕпе пурăннă вăл. Юлташĕсем хăналанма килсе çӳренĕ. Пĕррехинче вара хăй кайнă та...

Эрех ĕçнĕ май виçĕ тус хушшинче хирĕçӳ тухнă. Иккĕшĕ пĕр чĕлхе тупнă юлашкинчен, анчах хайхи хăнапа тарават пулма васкаман. Çĕçĕпе хирĕç тăнă, пуртăпа сулкалашнă... Йывăр суранĕсене тата юн нумай çухатнине пула чĕри тӳрех тапма чарăнсан та путсĕрсем çав-çавах ӳкĕте кĕме васкаман..

Преступлени паллисене пытарас шутпа тăвата талăкран вилене мунча кăмакинче çунтарма тĕв тунă. Никам ан систĕр тесе çĕр варринче хăтланнă. Этемĕн кĕлетки вырнаçайман, ури кăна çунса кĕлленнĕ. Хăрушă преступление вĕçлес тесе кăмакана тепĕр каçхине тивертнĕ хушăра шăп та лăп йĕрке хуралçисем пырса кĕнĕ те. Ывăлне ватă урăх ниçта та шырама пултарайман. Килтен юлашкинчен тухса кайсан хăйхискерсем патне çул тытнине милици ĕçченĕсене те пĕлтернĕ.

Сиснĕ пекех, çакăнта пĕрре мар çитсе килнĕ-ха ашшĕ, анчах лешсем яхăнне те яман: “Курман, илтмен, пĕлместпĕр!” Ку хутĕнче вара тунмашкăн майĕ те пулман. Йăлтах куç умĕнче.

Следстви комитечĕн республикăри управленийĕнче пĕлтернĕ тăрăх, айăпланакансем – çак районти Кăташра пурăнакан 33, 41 çулсенчи икĕ арçын. Вĕсен тĕлĕшпе çынна вĕлернĕшĕн УК 105 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă.

■ **Татьяна ВЫШИНСКАЯ**


**реклама пĕлтерӳ**
Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

**МНОГОЛЕТНИЕ ТРАВЫ: люцерна, костер и т.д. Т. 89276672368.**

## ПРОДАЮ

**2.Предлагаем** по фабричным ценам в рассрочку: стенки, прихожие, спальни, шкафы, комоды, кровати, матрацы в магазине “Балахнинская мебель”. Сборка, доставка. А.: Чеб., Гагарина, 11 /напротив Русского драмтеатра/. Тел. **56-41-21.** Сертифицировано.

**12.Оцинковку** рул., листовую от 0,5 до 2мм, профнастил оцинкованный, крашеный, комплектующие для кровли. Возможна доставка. Тел. 44-44-33.

**15.Керамблоки** /20х20х40/ качеств-ые. Дешево. Т. 89033587772.

**18.Сетку-рабицу** от производителя - более 80 видов, **сетку сварную** - более 30 видов, профнастил, гвозди, столбы, проволку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**25.Гравмассу, керамблок, песок, кирпич** силикатный, **торф.** Доставка. Т. 89023277585.

**39.КИРПИЧ** красный, силикатный, лицевой, рядовой; кольца колодезные, ЖБИ. Доставка манипулятором. Возможен безналичный расчет. Т. 89033584407.

**54.ПИЛОМАТЕРИАЛЫ:** обрезной от 4000 руб. за куб., брус индивидуального сечения, необрезной /25-50 мм/, вагонка, шпунтованная /половая/ доска, наличники и плинтуса, материал – хвоя. НДС выделяем. **Работаем без вых.** А.: Чеб., ул.Альгешевская, 18А /рядом с ТД «Георгий», ост. «пос.Альгешево»/, тел. **44-33-25.** *Эпир хамăр клиентсене юрататпăр!*

**55.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ.** Сайдинг /импортное производство/. Цемент. Оптом и в розницу. Т. 44-33-25.

**57. Гравмассу,** щебень, **песок, керамзит,** цемент, **торф** до 30 тн за рейс. **Недорого.** Сезонные скидки. Т.: 387015, 89276656129.

**63. Поможем построить дом!** Все бесплатно: консультации – вт., чт., сб. в 14.00; современные технологии и материалы; готовые проекты домов. Тел.: 30-55-10, 30-55-54. Адрес: г.Чебоксары, Канашское шоссе, д.7/1, ТК «Терминал».

**76. Гравий, камни банные,** керамблок, дрова, торф. Т. 89170664019.

**83.**Керамблок, песок, ОПГС, кирпич, цемент. Т. 89278503883.

## УСЛУГИ

**58.Лечение алкоголизма, табакокурения** ежедневно с 9 час., в субботу – без записи. Обр.: Чеб., Энгельса, 2. Т. **621184.** Лиц. 2101000170 МЗ ЧР. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**84.Анонимное лечение алкогольной зависимости.** А.: Чебоксары, пр. Ленина, 32А. Т. 551725, 670817, 551660, 501364. Лиц. Росздравнадзора 21-01-000261 от 31.01.08г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

## КУПЛЮ

**70. Аварийное авто** /после 2006 г.в./. Т.89026630330.

## РАБОТА

**85. Требуются** монолитчики в Москву. Куб. 1700 руб., жилье, питание. Т.89176648457.



чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



УЧРЕДИТЕЛЬ – “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ПАТШАЛĂХ УНИТАРИ ПРЕДПРИЯТИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун”– 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Генеральнăй директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Тĕп редактор çумĕ – шеф-редактор Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /генеральнăй директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА



Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – генеральнăй директор-тĕп редактор,
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор,
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь,
28-85-87 – яваплă секретарь çумĕ,
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ,
56-05-21, 56-22-31, 28-83-67 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ,
56-08-62 – экономика пайĕ,
56-03-04, 28-85-91, 28-85-33 – социаллă пурнăçпа вĕрентӳ пайĕ,
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ,
56-04-26 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ,
28-82-91 – корректорсем, 56-45-94 – фотокорреспондент,
бухгалтери – 28-83-64,
hypar2008@rambler.ru
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ,
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ,
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-32/ 6-11-82 – Патăрьел,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç.
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru



Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» ПУП компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел.: 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă” рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8140. Заказ 359.